## Кĕрхи ĕçсенчи асра юлнă пĕр кун

# “Кун пек тухăç савăнтарать, ĕçлес вăй-хала хушать”



Ачасен, учительсен, “Герой” хуçалăх ĕçченĕсен çакнашкал туйăмĕпе тулса тата чун хавалне хăпартса тухрăм эпĕ уйăх çурă каялла Кŭстерек ялĕ çывăхĕнчи çĕр улми пуссинчен



Ярапайкассинчи вăтам шкулта вĕренекен Л. Сорокина, Н. Столярова, Н. Иванова, Н. Димитриева, Е. Павлова кăнтăр апатĕнче.

йĕкĕр чышкă пысăкăш çĕр улмисемпе тулнă витресем çине ытараймасăр пăхса.

...Авăн уйăхĕнчи çу ăшшине çухатман хĕвеллĕ уяр кун. Вырма ĕçĕсемпе каярах юлнă хуçалăх уйĕсенче катара-катара “хир карапĕсем” пĕрин хыççăн тепри малалла шăваççĕ. Вĕсем те юлашки гектарсем çинче ĕнтĕ. Эрне маларах кĕрхи культурăсем акнă хирсем ачаш симĕс тум тăхăнаççĕ. Малашлăхпа пурăнакан хресчен вара вырма ĕçĕсене вĕçленĕ май “иккĕмĕш çăкăр” пуссисене тухать.

Вырма ĕçĕсене кăçал пуринчен малтан вĕçленĕ “Герой” ял хуçалăх предприятин çĕр улми пуссине кăнтăр вăхăчĕ тĕлне çитрĕм. Тулăх кĕркуннен илемĕнче ачасен савăк сасси инçетренех хăлхана кĕчĕ. Ачасемпе тулнă хире кăткă тĕммипе танлаштартăм та çывăха çитсен йăнăшмарăм. Йышлă вĕсем унта, анчах ĕçе йĕркелекенсем вырăнта пулнăран никам та йытă хăваламасть: кашнин хăйĕн вырăнĕ, шаннă ĕçĕ. Акă Ярапайкассинчи вăтам шкултан Шурчасене çĕр улми кăларма-пуçтарма пулăшма килнĕ ачасем копалка иртсе кайсан шап-шурă выртса юлнă çĕр улмисене витресене пухса хуçалăх панă сеткăсене ячĕç те уй хĕрне килнĕ столовăй машини патне чупрĕç.

– Йĕрке пирки ан манăр! – тесе кăшкăрса юлчĕ кăна манпа тĕл пулнă Надежда Михайловна Васильева завуч хăйсемпе паллаштарма пуçланă май. – Эпир Ярапайкассинчи вăтам шкултан. Ĕнер 88 ача пулсаччĕ те паян 81-ен тухрĕç. Пĕлтĕр пире “Герой” хуçалăхра “иккĕмĕш çăкăр” çинче ĕçленĕшĕн ĕç тŭлевĕ тивĕçтернĕрен (укçа та, шкул столовăйĕ валли хĕл каçмалăх çĕр улми те çителĕклĕ пулать) кăçал та кунтан каяс мар терĕмĕр. Иртнĕ çул 10 -11-мĕш классем çеç ĕçлерĕç пулсан, кăçал ку ĕçе 5-мĕш класран пуçласах явăçтартăмăр. Ĕçе ачасене кăçал хамăра тивĕçнĕ шкул автобусĕпе илсе çŭретпĕр. Пире кунта тирпейлĕхшĕн тупăшса ĕçлеме юнашар вăй хуракан Сыпайри тата Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлŭ паракан тĕп шкулсен коллективĕсем те хистеççĕ. Хăйне евĕр конкурс пырать ку тĕлĕшпе.

Хирти апат тутлине çакна астивнĕ çын çеç пĕлет. Шанатăп, паян уй хĕрринчи çерем çинче тупăшса апат çиекен ачасемшĕн те çак савăк вăхăт ĕмĕрлĕхе асра юлĕ.



Н. Ефимовпа А. Рыжков механизаторсем.

Ярапайкассисем кăнтăр апатне ларнă хушăра çĕр улмипе тултарнă çĕршер тулли сетка ларакан хирпе малалла утатăп. Копалкăсем ĕçленĕ май, ачасен куçĕсем столовăй машини енчен каймаççĕ пулин те, ĕç шавĕ лăпланмасть. Акă Сыпайри шкулта 7-мĕш класра вĕренекен Джамилия Баранова тытнă сетка патне тулли витресем йăтнă Дима Кожановпа Антон Баранов (6-мĕш класс) ăмăртса чупса çитрĕç. 7-мĕш класри Аня Яковлева та вĕсемпе пĕрлех. Сыпайри шкултан 35 ача килнĕ Шурчана çĕр улми пуçтарма. Кашниййĕн питĕнчех паян ĕçпе тулнă савăнăç.

Уйăрса панă кŭршĕллĕ лаптăкри Шурча шкулĕн ачисем те ывăннине пĕлмеççĕ. Пĕрисем шултра çĕр улми пуçтарнă вăхăтра теприсем вĕсенчен иртсе кайсах вĕттине пуçтарса илеççĕ. Кам маларах кайса пушатать – кунта та ăмăрту. Куллен ĕçе тухакан 47 ачаран кашни ăмăртурах хăйĕн çĕнтерŭçи.

Копалкăсемпе ачасене çĕр улми кăларса паракан Николай Ефимовпа Александр Рыжков механизаторсем ачасен тăрăшулăхĕпе кăмăллă, выляса ĕçлекен ачасене асăрханулăх пирки асăрхаттарсах тăраççĕ кăна.



Шурча шкулĕнче вĕренекенсем вĕренŭре те, ĕçре те хастар.

Çак вăхăтра хире “Герой” хуçалăх ертŭçи Р. Тимофеев килсе çитрĕ, тŭрех ачасемпе шŭтлесе илчĕ. Ачасем те шŭтрен юлманнине палăртрĕç.

– Тирпейлĕ кунсем те вĕççĕр мар пулĕ. Çакна шута илсе паян хуçалăхăн 80 гектар йышăнакан çĕр улми пуссисенче ачасемпе хуçалăх ĕçченĕсем вăй хунисĕр пуçне çĕр улми кăларакан икĕ комбайн та ĕçлет. Кăларса пухнă продукцие В. Борзаев, А. Любимов, А. Фадеев, С. Кудряшов водительсемпе Ю. Антонов, В. Степанов трактористсем вăхăтра турттарса тăнăран ĕç шавĕ кунĕпех лăпланмасть. Тухăç пурри те ĕçлеме хевте кĕртет пулас, – терĕ ачасемпе сыв пуллашса комбайнсем ĕçлекен хирелле илсе кайнă май Ростислав Николаевич.





Хуçалăх ертŭçи Р. Тимофеев çĕр улми кăларакан çĕнĕ комбайн ĕçĕпе интересленет.



В. Бурцев ĕçе кăларнă комбайн – хуçалăхшăн пысăк тĕкĕ.

Кунта вара хуçалăх кăçал туяннă икĕ МТЗ-892 ĕçлет. Николай Никифоров хăйне шанса панă çĕнĕ комбайна пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерет. Унччен хуçалăхра пулнă çĕр улми кăлармалли КПК-2-01 комбайна кăçал юсаса ĕçе кăларнă Володя Бурцев та комбайн çинче пĕрле ĕçлекен Л. Пискарева, В. Семенова, Ф. Семенов сортировщиксемпе тата В. Сорокин комбайнерпа пĕр вĕçĕм ĕçре.



Сыпайсем те çĕр улми уйĕнче кайри ретре пулмарĕç.

–Агротехникăна пăхăнни тата çĕнĕ сортсемпе ĕçлени пысăк тухăç çулĕ пулнине хамăр тĕслĕх çинче алла илсе пыратпăр, çĕнĕ технологисене çул пани те ял хуçалăх малашлăхĕ пулнине хамăр производствăра куратпăр. Кăçал эпир 80 гектар çине çĕр улмин “елизавета”, “удача”, “жуковский ранний”, “виза”, “голубизна” сорчĕсене лартрăмăр. Кашниех ăнса пулчĕ,– терĕ вăтам тухăç пирки вăл начар маррине палăртса çеç хуçалăх ертŭçи çур акирен хура кĕрччен хирте ĕçлекенсене вĕсен тăрăшулăхĕшĕн тав туса.

**Анатолий БЕЛОВ.**

## Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШŬЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧИ УТАРÇĂСЕМ КĂÇАЛ ЕПЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ ТАТА ХĔЛЕ МĔНЛЕ ХАТĔРЛЕННИНЕ КĂТАРТНИ (ОКТЯБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ)**

**Колонкăсенче: 1. Хуçалăхсем. 2. Утарçăсем. 3. Хурт çемйисен йышĕ. 4. Хĕл каçма вĕллесенче апат хăварнă (килогрампа). 5. Кăçал пĕтĕмпе сутлăх пыл илнĕ. 6. Пĕр çемье пуçне тивекен продукци хисепĕ (килогрампа).**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Ленин яч. хис. | И.С.Михайлова | 55 | 25,0 | 1618,5 | 29,42 |
| Ленин яч. хис. | Т. Ю. Иванова | 75 | 22,7 | 1631 | 20,3 |
| Ленин яч. хис. | Т. Ю. Иванова | 39 | 19,5 | 208,5 | 3,5 |
| “Сеятель” | В. И. Хораськин | 40 | 23 | 400 | 10,0 |
| Суворов яч. хис. | Л. Ф. Кузеев | 30 | 22,5 | 264 | 8,8 |
| Ильич яч. хис. | П.И.Константинов | 60 | 20,0 | 1002 | 16,7 |
| Е. Андреев яч. хис. | Н. И. Тодинов | 60 | 24,0 | 426 | 7,1 |
| Мичурин яч. хис. | В. И. Яковлев | 60 | 25,0 | 1740 | 29,0 |
| Чапаев яч. хис. | П. Т. Игнатьев | 60 | 23,3 | 600 | 10,0 |
| “Герой” | В. Л. Михайлов | 81 | 26,9 | 810 | 10,0 |
| “Передовик” | А. Д. Овчинников | 52 | 23,4 | 1100 | 22,5 |
| “Хлебников” КФХ | В.Л.Хлебников | 65 | 20,4 | 1397,5 | 21,5 |
| Чебоксарское ТПУ | В. И. Яковлев | 15 | 25,0 | 228 | 15,2 |
| Ильинка леснич. | В. А. Герасимов | 40 | 26 | 603 | 15,0 |
| Чебоксарский лесхоз | В. Л. Иванов | 75 | 21,7 | 1300 | 18,8 |
| **РАЙОНĔПЕ** | | **807** | **23,3** | **13328,5** | **16,5** |

Хурт-хăмăр ĕçчен те сăпайлă çынна юратать. Унăн аллинче вăл хунать, çултан-çул ытларах продукци парать. Районта вĕлле хурчĕ ĕрчетекенсем – шăпах çак карта ларакан ĕçченсем. Вĕсем хăйсен ĕçчен тусĕсемпе пĕр чĕлхе тупнă темелле ĕнтĕ. Çавăнпах вĕсен ĕç ŭсĕмĕсем те сумлă. Сводкăран курăнать ĕнтĕ, районти хурт-хăмăр ăстисем çу кунĕсене усăсăр ирттермен. Тăрăшуллă ĕçпе вĕсем кăçал пĕр çемье пуçне 16,5 килограмм (пĕлтĕр – 12,7 кг) сутлăх пыл илме пултарчĕç. Çывăхарах пăхсан вара районти утарçăсем хăйсен харпăрлăхĕнчи 807 çемьерен пурĕ 28 тонна та 935 килограмм пыл илни куç умне тухать. Вĕлле хурчĕсене хĕл каçма хăварнă пылсăр шутласан сутлăх пыл 13 тонна та 328 килограмм (пĕлтĕр 11 тонна). Кашни çемьене апатран тулăх хĕл каçарма вĕллесенче вăтамран хăварнă 23,3 килограмм пыл хуртсемшĕн хĕл кунĕсенче питех те вырăнлă пуласса шанатăп.

Кăçал утар ĕçĕнче уйрăмах лайăх кăтартусем тунă Василий Ильич Яковлева, Ираида Семеновна Михайлована, Татьяна Юрьевна Иванована, Андрей Димитриевич Овчинникова, Владимир Леонидович Хлебникова паян иртекен Тыр-пул уявĕнче тав сăмахĕ çеç калас килет. Вĕсен ĕçĕ ыттисене те тăрăшуллăрах пулма çул уçать.

**П. СЕМЕНОВА,**
**республикăри хурт-хăмăр агентствин Муркаш районĕнчи зоотехник-хатĕрлевçи.**



П. Семеновапа В. Яковлев çулталăк пĕтĕмлетĕвĕсемпе паллашаççĕ.

## Вулакан пултарулăхĕ

# Савăнар-и уявра!

Кĕр çитсессĕн çулсерен,
Хĕрŭ ĕççи вĕçленсен,
Тыр-пул уявне, туссем,
Ирттереççĕ Муркашсем.

Уява уçса пурне
Саламлать хăй Кĕркунне.
Ял çыннине тав тăвать,
Çĕре çити пуç таять.

Çĕнĕ тырă çăкăрпе,
Çăра симпыл сăрипе
Ĕç паттăрсене сăйлать,
Хаклă парнесем парать.

“Савăнăр, – тет йăл кулса,
Юрласа та ташласа –
Ырă чунлă Чăвашсем,
Хăнасем те, Муркашсем!..”

Тыр-пул акса ŭстерме,
Тухăçлă пухса кĕртме
Пŭлĕх патăр сывлăхне,
Яланах çĕр ĕçченне!

Ĕç çынна илем кŭрет,
Ĕç ăнах телей пиллет.
Чыс-хисеп ял ĕçченне,
Паян кун та, малашне!

**Игорь МАЙКОВ.**

Кашмаш ялĕ.